**Çулла ку…**

Çулла ку, анчах та çу иртнĕ тĕлте.

Асту-ха тухсан эс таса уй-хирте:

Часах та туятăн — уйсем урăхла,

Чечен çеçке-курăк çиçмест тавралла.

Е пыр вăрмана ак... Вăрман хушшинчен

Çĕр тĕрлĕ сас-юрă тухмасть кайăксен:

Шур хурăн çинче тек куккук авăтмасть,

Ĕшне хĕрринче те шăпчăк юрламасть.

Кас-кас вашлатса пĕр килет сĕврек çил,

Вăрман хумханать ак — сăна, сиссе ил:

Кашлать çӳллĕ чăрăш, суллать туратне,

Кашлать — ӳпкелет вăл васкан çу кунне;

Кăра çил вĕрсессĕн типшек çулçăсем

Вĕçсе вĕлкĕшеççĕ вăхăт-вăхăтран;

Типшек çулçăсем... çурхи çеçкесем! —

Пĕр сассăр ӳкеççĕ тăван туратран...

Шенкер тӳпе тăрăх хăмăр пĕлĕтсем

Хуллен шăвăнаççĕ хĕвел айнелле,

Унтах — çула тухнă хура хăлатсем

Майпе ярăнаççĕ тĕнче хĕрнелле...

Хĕвел йăлкăшать-ха, çанталăк вĕри, —

Анчах сенкерленчĕ çут тĕнче хĕрри.

Сив кĕр те çитмен-ха, инçе вăл, инçе,

Çавах ун чаршавĕ — çанталăк çинче.

Çаплах пурнăçра та, çур ĕмĕр иртсен

Темле сисĕм-туйăм тытать кăмăлна;

Вăю та нумай-ха, ватту та çитмен,

Анчах ак шеллетĕн васкан кун-çулна.

1940

*Элкер, С. Çулла ку : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 254.*